ХЫПАР

1999 ҫулхи утӑ уйӑхӗн 30-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# КИЛ-ҪУРТ, ХУШМА ХУҪАЛӐХ

15 (864) №, 2016, ака/апрель, 21 Хакӗ ирӗклӗ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТӖП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/ака уйӑхӗн 20-мӗшӗ тӗлне/

| ПАХЧАҪИМӖҪ | |
|---|---|
| *Килограмм* | *тенкӗ* |
| Ҫӗрулми | 13-15 |
| Купӑста | 20 |
| Сухан | 25 |
| Кишӗр | 30-40 |
| Ыхра | 200-250 |
| Хӑяр | 80-120 |
| Хӗрлӗ кӑшман | 30 |
| Помидор | 80-120 |
| Пылак пӑрӑҫ | 120-250 |
| Тӑварланӑ хӑяр | 120-150 |
| Йӳҫӗтнӗ купӑста | 100-120 |
| **УЛМА-ҪЫРЛА** | |
| Панулми | 60-120 |
| Исӗм ҫырли | 90-130 |
| Апельсин | 60-100 |
| Лимон | 120-180 |
| Банан | 60-70 |
| Мандарин | 75-120 |
| Груша | 80-150 |
| Гранат | 120-180 |
| Сырлан /облепиха/ | 200 |
| Кӗтмел ҫырли | 150 |
| Шур ҫырли | 150 |
| **ҪӐНӐХ-КӖРПЕ** | |
| Тулӑ ҫӑнӑхӗ | 25 |
| Вир кӗрпи | 35 |
| Хуратул -»- | 64-66 |
| Тулӑ -»- | 32 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 62-68 |
| * * * | |
| Сахӑр песукӗ | 50-52 |
| Пыл | 350-450 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ӗне ашӗ | 170-300 |
| Сысна ашӗ | 170-300 |
| Сурӑх ашӗ | 180-280 |
| Пӗвер | 120-160 |
| Чӑх | 250-300 |
| * * * | |
| Ҫӑмарта /теҫетке/ | 50-68 |
| **ПУЛӐ** | |
| Шӑнтнӑ скумбри | 230 |
| -»- сельдь | 180-200 |
| Мойва | 200 |
| Минтай | 160 |
| Горбуша | 280 |
| Шӑла пулӑ /судак/ | 250-300 |
| Ҫупах /лещ/ | 120 |
| Ҫуйӑн /сом/ | 200 |
| Карп | 230 |
| Ҫӑрттан | 170 |
| **СӖТ-ТУРӐХ** | |
| Сӗт /литр/ | 30-35 |
| Хӑйма | 200 |
| Тӑпӑрч | 200 |
| Сыр | 350 |
| Услам ҫу | 220 |



## Арпус ӳстерсе пӑхар-и?

**Кашни пахчаҫӑ кӑштах экспериментҫӑ та иккенне пурте пӗлетпӗр. Кам тӗрлӗрен пахчаҫимӗҫ, кӑмӑла кайнӑ ҫӗнӗ чечек акса-лартса пӑхман? Туяннӑ арпус, дыня вӑррине те чылайӑшӗ акса пӑхнах пулӗ.**

Кӑнтӑр енчен тиесе килнӗ дыня е арпус вӑррине илсе юлса тепӗр ҫул акмашкӑн кирлӗ мар. Вӗсенчен пирӗн патра пурпӗрех паха пылак ҫимӗҫ туса илме май килмӗ.

Пирӗн тӑрӑхра хӑвӑрт пулса ҫитекен сортсем ҫимӗҫ ӳстерсе ӗлкӗреҫҫӗ. Пысӑк арпус туса илессишӗн ӑшталанни те тӗрӗс мар. Кунта ӳстерме юрӑхлӑ арпус сорчӗсем: Подарок северу F1, Подмосковный чарльстон F1, Розовое шампанское F1, Кримстар F1, Сибирские огни. Куратпӑр ӗнтӗ, кусем пурте пекех F1 тесе палӑртнисем. Эппин, вӗсен вӑррине илсе юлсассӑн тепӗр ҫул паха ҫимӗҫ илесси пулмӗ. F1 вӑрлӑха ятарлӑ хуҫалӑхсенче специалистсем уйрӑм меслетпе туса илеҫҫӗ.

Дыньӑн кунта лайӑх ҫитӗнекен сорчӗсем – Золушка, Ирокез, Дубовка. Лайӑх ҫимӗҫ туса илес тесен арпуса та, дыньӑна та калчаран лартмалла. Вӗсем кавӑн-хӑяр йышӗнчен. Ҫавӑнпа калча тума та пӗр вӑхӑтрах акмалла. Калчана куршакра 30-35 кун ҫитӗнтерсессӗн 4-6 ҫулҫӑллӑ пулать – ӑна пахчана куҫарма вӑхӑт. Паллах, ирӗке куҫарасси ҫанталӑк мӗнле тӑнинчен килет.

Хушма ҫутӑ калчана кирлех мар. Мӗншӗн тесен ӑна ака уйӑхӗн вӗҫнелле ҫеҫ акатпӑр, кун тӑршшӗ ахалех вӑрӑм. Тутлӑхлӑ япаласемпе апатлантарни вара пӗлтерӗшлӗ. Ӳсен-тӑрана хӑвӑртрах аталанма пулӑшать.

Арпус та, дыня та шӑрӑхра ӳсекенскерсем. Вӗсене яланах шӑварма юрамасть. Тӑпра кӑпка тата пулӑхлӑ пулмалла. Ӑшӑ шывпа тӑпра типнӗ майӑн, эрнере пӗр хутчен лайӑх ислентерсе шӑвармалла.

Ҫак культурӑсене ҫитӗнтерессинче пӗр уйрӑмлӑх пур. Арпусӑн ама чечекӗсем /ҫимӗҫ пулаканнисем/ тӗп хунавра та, туратланса тухнӑ ҫеҫкере те лайӑх аталанаҫҫӗ. Дыньӑн тӗп тунинче вара ама чечексем хӑвӑрт тухмаҫҫӗ, туратланса тухакан ҫеҫкере ама чечексем хӑвӑртрах тытӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа дыньӑн ҫеҫкин тӑррине куршакра чухнех 4-5 ҫулҫӑ тухсассӑн татса илмелле. Ҫакӑ ҫеҫкене туратланма май парать.

Арпус-дыньӑна парника е теплицӑна ҫу уйӑхӗн варринче куҫарса лартмалла. Ку вӑхӑтра, паллах, сивӗ ҫанталӑк йӑлтах иртсе пӗтмест-ха. Ҫанталӑк сивӗтсессӗн парникри калчана та ҫиелтен лутрасилпа витмелле.

Ирӗке куҫарса лартас пулсассӑн сивӗсем йӑлтах иртессе кӗтмелле. Ҫу уйӑхӗн вӗҫӗнче е ҫӗртме уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче хӗвел лайӑх ӳкекен вырӑна лартмалла.

Арпус, дыня ӳсрӗҫ тейӗпӗр. Ҫимӗҫ пиҫсе ҫитнине епле пӗлмелле-ха? Дыня пиҫнине пӗлме ансатрах. Вӗсен ҫийӗ сарӑхать, дыня шӑрши аван сисӗнет. Арпус пулса ҫитнине пӗлме йывӑртарах. Ҫак паллӑсене пӑхмалла. Ҫимӗҫ хуппинчи эрешсен тӗсӗ янкӑрланать. Ҫиелти шуранкӑ сий вӑйсӑрланать, пӳрнепе шаккасассӑн сасӑ янӑрамасть.

Ӗҫ йӗркине пӗлсе йӗркелесессӗн пирӗн тӑрӑхра та пит пысӑках мар пулин те, пиҫсе ҫитнӗ тутлӑ арпус, дыня ҫитӗнтерме пулать. Вӗсене пӑхасси ытти пахчаҫимӗҫе пӑхассинчен кӑткӑсрах мар.

## Мӗнле хӑяр лайӑхрах?

Хӑяр ҫиме юратман ҫын сук та пулӗ. Ҫулла ӑна тӑранинчен ҫиетпӗр, хӗл валли тӑварлатпӑр, маринадлатпӑр. Ҫапах та хӑярӑн ҫулла ҫимелли тата тӑварламалли сорчӗсен пурри ҫинчен пӗлсех каймастпӑр.

Ҫулла салат туса ҫиме лайӑх сортсен ҫак уйрӑмлӑхӗсене палӑртмалла: вӑрӑм, ҫийӗ яка, шатрашкасӑр. Вӗсем ҫуркунне лавккасенче сутакан хӑярсем пекех тӑсланкӑ ӳсеҫҫӗ. Салатлӑх сортсем – Герман, Феникс плюс, Салтан, Пересвет F1, Банзай F1 т.ыт.

Тӑварлама, маринадлама лайӑх хӑярсем вара шатрашкаллӑ, хытӑ йӗпсемлӗ, кӗске пулаҫҫӗ. Вӗсен хуппи хулӑнрах. Маринад хупӑ витӗр ерипен тикӗссӗн сӑрхӑнса кӗрет, банкӑра ҫемҫелмеҫҫӗ.

Консервлама хура йӗпленчӗклӗ хӑяр лайӑхрах. Ҫак сортсене палӑртмалла: Нежинка, Этап, Эра, Засолочный F1, Баловень т.ыт.

Хӑшпӗр сорта чӗрӗлле ҫиме те, тӑварлама та аван. Кусем шатрашкаллӑ, йӗпленчӗкӗ шурӑ, тӑсӑлса каймаҫҫӗ. Вӗсем – Бугорок F1, Лидер F1, Владимир т.ыт.

ҪЫРӐНТАРУ-2016

2016 ҫулӑн II ҫуррине илсе тӑмашкӑн
"Хыпар" Издательство ҫурчӗн кӑларӑмӗсене
ака уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен ҫак хаксемпе ҫырӑнтараҫҫӗ
"Хыпар" – **736,02** тенкӗ, "Хыпар-эрнекун" – **338,34** тенкӗ,
«Кил-ҫурт, хушма хуҫалӑх» – **219,36** тенкӗ.

## Халӑх сӑнанинчен

■ *Кайӑксем йывӑҫӑн хӗвел лайӑх ӳкекен енне йӑва ҫавӑраҫҫӗ – ҫулла сивӗ килет.*

■ *Ака уйӑхӗн 21-мӗшӗнче ирхине хӗвеллӗ пулсан ҫулла хӗвеллӗ пулать, ӑмӑр ҫанталӑк пулсан – ҫулла йӗпе-сапа килет.*

■ *Пӗлӗтсем ҫӳлте, хӑвӑрт шӑваҫҫӗ – уяр ҫанталӑка.*

■ *Ака уйӑхӗнче ҫӑхан иртнӗ ҫулхи чӗпписене хӑйсене тӗллӗн пурӑнма ҫемьерен уйӑрса ярать.*

## Ҫурхи вӑрманта

Ҫуркунне вӑрмана питӗ каяс килет. Анчах та пире ӑста та пулин тухма сӑлтав кирлӗ. Мӗнех, ыйхӑран вӑранса пыракан вӑрмана ҫитме сӑлтавне те тупма пулать. Ака уйӑхӗнче унта пухаҫҫӗ...

**Сарпуҫ.** Вазӑна вырнаҫтарма татмалла мар ӑна – ку чечек хӑвӑртах шанать – сада е дача участокне лартма вара питех те лайӑх. Примула, галантус /халӑхра ӑна ҫеҫпӗл те теҫҫӗ/ лайӑх чӗрӗлеҫҫӗ.

**Юман хуппи.** Юман хуппи шӑл, вар-хырӑм ыратсан пулӑшать. Ӑна хамӑр та хатӗрлеме пултаратпӑр. Ҫак ӗҫе апрель уйӑхӗнче пурнӑҫламалла. Анчах та йывӑҫа пӗтӗмпех ҫаратса хӑварма юрамасть.

**Хурӑн кӑчки.** Вӗсене кӳпчесе ҫитнӗ вӑхӑтра /ҫурса яриччен/ татмалла.

**Кӗтмел /брусника/ ҫулҫи.** Ҫуркунне вӑрмана кӗтмел патне те каяҫҫӗ. Ҫулҫине татаҫҫӗ – вӑл бактерисене пӗтерекен витӗмпе палӑрать, шӑк хӑвалама пулӑшать.

**Кӑмпа.** Халӗ мӗнле кӑмпа тейӗ хӑшӗ-пӗри. Кӑтра кӑмпа /сӗлӗ кӑмпи те теҫҫӗ ӑна/. Ҫапах та ҫак кӑмпана пуҫтарма лайӑх пӗлекен ҫынпа ҫеҫ ҫула тухмалла.

**Хурӑн сӗткенӗ.** Ҫуркунне кирек мӗнле пулсан та хурӑн сӗткенӗ ӗҫсе юлма тӑрӑшмалла. Анчах та йывӑҫа ватса-хуҫса пӗтермелле мар.

## Япала ҫумашкӑн

● Трикотаж япала «кӗнӗ» пулсан ӑна нӳрлӗ ҫӳхе пусма витӗр пӑспа пӗрӗхмелле. Пӗрӗхнӗ майӑн туртса сармалла.

● Шурӑ ҫӑмран тунӑ япалана шуратас тесен ҫӑвас умӗн икӗ сехетлӗхе 5 литра пӗр апат кашӑкӗ савӑт-сапа ҫумалли шӗвек янӑ шывра ислетмелле. Ҫӑм япаласене вӗри тата сивӗ шывра ҫума юрамасть. Ислетсе лартмалли шыв та лӗп ҫеҫ пулмалла.

## Вулакансем ыйтнипе

### Ҫыру ҫыртăм...

**«Хисеплĕ редакци. Сирĕн хаҫата юрататпăр, уншăн тав тăватпăр. Питĕ кирлĕ хаҫат вăл – «Кил-ҫурт, хушма хуҫалăх». «Вешенка – усăллă ҫимĕҫ» статья мана та, юлташсене те хавхалантарса ячĕ. Кулянтăм ырă кăмăллă кăмпаҫă Васьăпа ҫыхăнма май килменшĕн. Вася мĕнле адреспа пурăннине е телефон номерне те пулсан ҫырман. Тем пек унпа ҫыхăнас, кăмпа ӳстерес ыйтупа калаҫас килет. Ман улăмĕ те, кăмпа ӳстерме пӳлĕмĕ те пур. Гипс та тупма пулать. Василий Гатилинпа мĕнле ҫыхăнмаллине ҫырса пĕлтерме ыйтатăп сирĕнтен...»** – ҫырать Пăрачкав районĕнчен Людмила.

Ҫырусем час-часах килеҫҫĕ редакцине. Хаҫат вулакансемпе хутшăнма эпир яланах хапăл. Вулаканшăн ĕҫлетпĕр-ҫке. Хаҫат кăсăклă пуласси сирĕнтен те килет. Сирĕн сĕнӳсем, ыйтăвăрсем хаҫата пуянлатма пулăшаҫҫĕ.

Вулаканăмăрсем тепĕр чухне пĕр-пĕр статьяпа паллашнă хыҫҫăн, «адреса е телефона мĕншĕн кăтартман-ши?» тесе ыйтса ҫыраҫҫĕ е шăнкăравлаҫҫĕ. Сăлтавĕ ҫакăн пек: пĕр-пĕр алĕҫ ăсти е организаци ĕҫĕхĕлĕпе паллаштарнă чухне статьяра унăн телефонне, адресне ҫырса кăтартма май килмест. Пичет саккунĕ ун пек тунине реклама пек хаклать, уйрăм налук хурать, штрафлама пултарать.

Хăвăра кăсăклантаракан статья пирки ыйтусем пулсан редакцие шăнкăравласа е ҫыру ҫырса ыйтма пултаратăр. **Редакци адресĕ хаҫатăн 4-мĕш страницинче, телефон – 56-15-30.**

## Ака кăмпи

**Ака кăмпи /сморчки/ – ҫуркунне чи малтан тухакан ҫиме юрăхлă кăмпа. Ăна хăшпĕр ҫĕрте кăтра кăмпа теҫҫĕ. Пĕлсе хатĕрлесен ҫак кăмпа питĕ тутлă. Анăҫри ҫĕршывсенче ăна деликатес йышне кĕртеҫҫĕ.**



Ака кăмпи     Суя ака кăмпи

Ака кăмпи лăсăллă е хутăш вăрмансенче ӳсет. Кăмпа шыраса вăрмана шалтан-шала кĕме кирлех те мар. Вăл хăйăрлă тăпрана юратать. Хăйăрлă, сайра ӳсекен вăрман, хуҫасăр юлнă юхăнчăк садсем, ҫуннă тĕлсем – ака кăмпи ӳсекен вырăнсем. Пирĕн тăрăхра ҫиме юрăхлă ака кăмпин 3 тĕсĕ ӳсет. Ака кăмпи /сморчок съедобный/ ҫуллахи кăмпасенчен уйрăлса тăрать. Туни кăмпанни евĕрех, 7-10 см ҫӳллĕш, диаметрĕ 3 см ҫитет, шĕлепки вара пĕркеленчĕклĕ, кăтрашкаллă, форми ҫăмарта евĕрлĕрех – кăшт тăсмакрах е ҫавракарах пулать. Шĕлепки туни ҫумне ҫыпăҫса тăрать, ҫутă хăмăр, тĕксĕм хăмăр, сăрă хăмăр тĕслĕ. Кăмпа ăшĕ хăвăл.

Ака кăмпин тепĕр тĕсĕн /сморчок конический/ шĕлепки вăрăм, конус пек. Пĕркеленчĕкĕсем вĕлле хурчĕн карасĕ евĕрлĕрех, анчах карас пек тĕрĕс мар, пĕчĕк е пысăкрах, урлă-пирлĕ. Унăн шĕлепки те тунипе ҫыпăҫса тăрать. Кăмпана ҫурсассăн – ăшĕ хăвăл. Ҫак кăмпасем – ҫиме юрăхлисем.

Ҫурхи кăмпасен хушшинче ҫиме юраманнисем те тĕл пулаҫҫĕ. Вĕсем ака е кăтра кăмпа евĕрлĕрех, вырăсла строчки теҫҫĕ. Наркăмăшлă кăмпасене ака кăмпинчен ҫăмăллăнах уйăрма пулать. Юрăхсăррисен шĕлепке форми ҫук. Вĕсем аҫтăрхан мăйăрĕн тĕшши пекрех, пысăк – диаметрĕпе 10-13 см ҫитеҫҫĕ. Кăмпа шĕлепкине ҫурсассăн – хăвăл мар. Пĕчĕк хăвăлсем пулма пултараҫҫĕ. Наркăмăшлисен туни кĕске, сарлака. Темиҫе туна пĕрлешсе тăнăн курăнать.

Ҫурхи кăмпасен хушшинче строчок гигантский тата островерхий текеннисене те палăртаҫҫĕ. Вĕсен шĕлепкисем те тĕрĕс мар, чалăш-чĕлĕш аталанса ӳсеҫҫĕ, ҫиме юрăхсăр. Ку кăмпасем пирĕн тăрăхра питех тĕл пулмаҫҫĕ.

Тĕлĕнтермĕш шĕлепкеллĕ ҫурхи кăмпасене хăшĕсем – мухтаҫҫĕ, хăшĕсем – сивлеҫҫĕ. Ăста кăмпаҫăсем ака кăмпине пуҫтарса тĕрлĕ апат хатĕрлеҫҫĕ. Ăна типĕтме, тăварлама, маринадлама, яшка пĕҫерме, ăшалама пулать. Чи кирли – ака кăмпине лайăх ҫумалла та 15-20 минут шывра вĕретсе илмелле, вĕренĕ шывне тăкмалла. Ун хыҫҫăн кирек мĕнле апат хатĕрлеме юрать.

«ТЕРМИНАЛПА»
ҪУРТ ТĂВАТПĂР

3-мĕш канаш

## Пирĕнпе перекетлĕр!



Реклама

*Шупашкарти «Терминал» суту-илӳ комплексĕн территорине пушăлла кĕрекен, груз тиесе тухакан транспорт юхăмĕ – строительство тапхăрĕ ҫывхарнин палли. Ҫак тапхăра компани тĕплĕ хатĕрленнĕ.*

«Пĕтĕмпех стройка валли» – ҫапла кĕскен палăртать суту-илӳ комплексĕн генеральнăй директорĕ Владислав Никитин «Терминал» ĕҫĕн ҫул-йĕрне. Строительство тени ку тĕслĕхре анлă пĕлтерĕшлĕ – **пăтапа стройматериалсенчен пуҫласа кĕреҫепе йывăр бульдозер таранах.**

– Апла пулин те тĕп ĕҫ – ҫурт-йĕр ҫĕклекенсене /строительство организацийĕсене те, ахаль ҫынсене те/ стена тумалли материалсемпе тивĕҫтересси, – калаҫăва тăсать Владислав Леонидович. – Регионти облицовка кирпĕчĕпе тата газобетонпа тивĕҫтерекен тĕп поставщик пулнă май эпир кĕркуннехисхĕллехи тапхăр тăршшĕпех ҫак материалсен кирлĕ саппасне хамăрăн складсенче хатĕрлесе хурас енĕпе ҫине тăрса ĕҫлерĕмĕр.

Ҫак ĕҫ кăтартăвĕ – темиҫе ретпе купаласа хунă стройматериалсен километрĕсем. Стройка пуҫараканшăн пăхса савăнмалăх пур. Кирпĕч питĕ нумай, унăн ассортиментне, тĕсĕсен спектрĕ питĕ анлă /300 ытла йышши тата тĕсли/ – куҫ алчăраламалла! Ҫакă тĕлĕнтермест, кунта «Терминал» чылай ҫул алла-аллăн ĕҫлекен, ҫĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче вырнаҫнă виҫĕ теҫетке ытла кирпĕч завочĕн продукцине пухнă вĕт.

Чăн та, асăрхаттараҫҫĕ: ку саппассем пăхма кăна питĕ пысăк – вĕсене хăвăрт туянса пĕтереҫ. Ҫийĕнчен сутуилӳ комплексĕн ертӳҫисен тĕлĕнмелле май пирки те каларĕҫ: ҫакă – хĕллехи пĕчĕк хаксемпе кӳнĕ продукци. Ăна татах илсе килеҫҫĕ. Анчах ҫуллахи тапхăр ҫывхарнă май, строительство ĕҫĕсем хĕрсе ҫитнĕ чухне, заводсем хаксене ӳстереҫҫех-тĕр – кирпĕче нумай туянпине усă курса юласшăн. Ҫакна, паллах, утă уйăхĕн пуҫламăшĕнчен энергоресурссен тарифĕсем хăпарасси те сăлтавлать – нихăш производитель те тăкаклă ĕҫлес темĕ.

Акă мĕншĕн суту-илӳ комплексĕнче стройматериалсем туянассине ырана хăварма сĕнмеҫҫĕ. **«Терминала» паянах килĕр!** Хăвăрăн ҫуртăра ҫĕклессипе ҫыхăннă ĕмĕте пурнăҫлама шăпах ҫакăнта килнинчен пуҫламалла. Ҫакă чылай перекетлеме пулăшĕ – **кирпĕчпе газобетон блоксене хальлĕхе хĕллехи йӳнĕ хаксемпе туянма пулать.** Кунта ҫурт туma кирлĕ ытти материал та пĕтĕмпех пур.

Республикăра пурăнакансенчен нумайăшĕ суту-илӳ комплексĕне туслă пулнин уссине курса ĕненнĕ ĕнтĕ: **Чăваш Енре кăна «Терминал» пулăшнипе хăйнеевĕрлĕ архитектурăллă 1 пин ҫуртпа коттедж тунă.** Вĕсенчен чи интереслисене «Терминалăн» суту-илӳ залĕсенчи фотостендсем ҫинче курма пулать.

Специалистсем мĕн чухлĕ материал кирлине, унăн хакне тĕп-тĕрĕс шутласа парĕҫ, ҫĕнĕ строительство технологийĕсемпе паллаштарĕҫ, тӳлевсĕр консультаципе пулăшĕҫ. **«Ҫăрапа питĕрмелле» хатĕр ҫурт тутармашкăн та саккас пама пулать.** Пулас ҫуртăн хăвăра килĕшекен проектне суйласа илме те май пур, каталогра вĕсем – темиҫе пин.

**Н.КОНОВАЛОВ.**

Ҫак адреспа КĔТЕТПĔР: *Шупашкар, Канаш ҫулĕ, 7/1 ҫурт, Алькеш, «Терминал» суту-илӳ комплексĕ; тел.: /8-8352/ 30-55-10, 30-55-15; www.terminaltk.ru.*

## Ҫанталăк

| | кăнтăрла | ҫĕрле |
|---|---|---|
| 21.04 | + 9 | + 3 |
| 22.04 | + 9 | + 2 |
| 23.04 | + 6 | + 2 |
| 24.04 | + 11 | + 3 |
| 25.04 | + 13 | + 8 |
| 26.04 | + 17 | + 8 |
| 27.04 | + 17 | + 10 |

| Кун | тăршшĕ | Уйăх | кунĕ |
|---|---|---|---|
| 21.04 | 14.43 | 15 | у.к. |
| 22.04 | 14.47 | 16 | у.к. |
| 23.04 | 14.52 | 17 | у.к. |
| 24.04 | 14.56 | 18 | у.к. |
| 25.04 | 15.01 | 19 | у.к. |
| 26.04 | 15.05 | 20 | у.к. |
| 27.04 | 15.10 | 20 | у.к. |

Кун тăршшĕ 15 сехет те 10 минут.
8 сехет те 9 минут таран вăрăмланать.
22-мĕшĕнче уйăх тулать, кивелме пуҫлать.

## Печени – типĕ валли

Тăварланă пахчаҫимĕҫ шывĕпе тутлă печени пĕҫерме пулать. Типĕ тăнине кура ăна ҫăмартасăр, сĕт-турăхсăр хатĕрлĕпĕр. Банкăри маринадра та пĕҫерме пулать, анчах маринадра уксус сахал пулсан ҫеҫ. Вăйлă уксуслă маринад пылак ҫимĕҫ хатĕрлеме юрăхсăр.

**Печени пĕҫерме кирлĕ: 1 стакан хăяр е помидор шывĕ, 0,5 стакан тип ҫу, 1 стакан сахăр песукĕ, 3 стакан ҫăнăх, кокос тĕпренчĕкĕ 100-120 г /мкĕ пĕчĕк чĕркем/.**

Пĕр хутаҫри кокос тĕпренчĕкне сахăрпа хутăштаратпăр, хăяр шывĕ, тип ҫу, ҫăнăх хушса пăтратататпăр. Чустана лайăх ҫăратпăр. Вăл ҫăра, формăна тытакан пултăр.

Чустана йĕтĕрлесе саратпăр, ҫиелтен кокос тĕпренчĕкне сапатпăр, печение стакан е рюмка хĕррипе касса кăларатпăр. 180 градуса ҫити хĕртсе хатĕрленĕ духовкăна 10-15 минутлăха лартатпăр.

Чустана ҫӳхе сарнă пулсан печени хăвăртрах писет. Духовкăна вăхăт-вăхăт уҫса пăхмалла.

Кокос тĕпренчĕкĕ вырăнне чустана аҫтăрхан мăйăрĕ, курага е исĕм хушма юрать.

## Пенополистиролбетон – ҫĕнĕ стройматериал





**Иртнĕ ĕмĕрте ҫурт-хуралтăна йывăҫран /пĕренерен/ тата кирпĕчрен ытларах хăпартнă пулсан, /каярах керамзитобетон блоксенчен витесем тăватчĕҫ/, халĕ вара ҫурт-йĕр тумалли ҫĕнĕ технологи аталанса вăй илсе пыни куҫкĕрет. Ҫĕнĕ технологипе хатĕрленĕ стройматериалсен палахăхĕ, чăтăмлăхĕ уйчченхисемпе танлаштарсан ним чухлĕ те кая мар. Вĕсем усă курма ҫăмăл, укҫа-тенкĕ енĕпе вара – перекетлĕрех.**

Ҫак меслетсенчен пĕри – пенополистиролбетон, ҫĕнĕ технологипе хатĕрленĕ стройматериал. Вăл ҫăмăл, чăтăмлă, ăшă тытать, шăв-шав ямасть.

Вырăнта хатĕрлекен пенополистиролбетон растворĕ уйрăм ҫынна ытлашши пысăк тăкаксемсĕрех ҫурт-йĕр хăпартма май парать.

Пенополистиролбетон – портландцемент растворĕпе пĕрчĕллĕ полистирол хутăшĕ. Ăна юлашки 20 ҫул хушшинче усă курма пуҫланă. Материал ҫирĕп те нумай ҫул пахалăхлă пулнине тĕрĕслеме ҫителĕклĕ вăхăт. Тĕрĕслев вăхăчĕ полистиролбетон ҫурт-йĕр хăпартмалли прогрессивлă материал пулнине кăтартса панă.

**Унăн лайăх енĕсем:**

- экологи тĕлĕшĕнчен таса – наркăмăшлă япаласем /токсинсем/ бетона тунă чухне те, ҫуртра пурăннă чухне те тухмаҫҫĕ,
- ҫурт 100 ҫула яхăн пахалăхне ҫухатмасть,
- стенан сывлăш ҫаврăнăшĕ аван /сывлать/,
- ăшă лайăх тытать, шăв-шав ямасть, ҫунмасть,
- вăхăт иртнĕҫемĕн материал «пармасть».

Пенополистиролбетон стенана пăрапа /перфораторпа/ шăтарма, пăта ҫапма, касма, саморезка пăрса кĕртме пулать.

Ҫурт тăвас тесен стенана тӳрех ҫурт вырăнĕнче хăпартмаллине шута илмелле. Маларах никĕс ярса хатĕрлемелле. Тулаш стенан хулăнăшĕ 40 см кая мар, шалти стенасем 20 см пулмалла. Вите, гараж, сарай стенине ансăртарах тума юрать. Ҫак бетон урай сарма та юрăхлă.

Никĕс лайăх типнĕ хыҫҫăн стенана хăпартма ятарлă хашаксем /опалубка/ хатĕрлемелле. 1 метра яхăн ҫӳллĕш хашака никĕс ҫине ҫирĕплетсе тăратмалла, унта пенополистиролăн цементлă хутăшне тултармалла. Пĕр талăк типĕтнĕ хыҫҫăн хашака ҫӳтсе илсе ҫӳлерех ҫирĕплетмелле, растворпа тултармалла. Пĕр хутлă ҫурта ҫапла майпа 4 кунра ҫемье йышĕпех хăпартма пулать.

Ҫӳтмелли хашака хăмаран, профнастилтан, авăнман профильсенчен тума пулать. Ӗҫе вĕҫленĕ хыҫҫăн ҫӳтнĕ хашак килтĕрĕшре усă курма юрăхлă.

Хашака ҫӳтмелле мар, тулаш стенан пичĕ пек те хатĕрлеме пулать. Кун пек чухне каркаса ҫиелтен илемлĕ металл сайдингран тусан аван. Нӳрĕке тӳсĕмлĕ гипсокартон е тимĕр профиль те тулаш стена пичĕн хашакне юрăхлă.

Хашака ҫӳтмелле тусан полистиролбетон стенана тулаш енчен штукатуркăлама юрать.

Пĕр кубла метр раствор хатĕрлеме 200 кг яхăн цемент /маркине кура сахалрах е ытларах/, 100 кг таса хăйăр, 10 кг полистирол, 4 кг латекс, 115 кг шыв кирлĕ. Тăваткал метра ҫакăн ҫуррине те сахалрах каять. Укҫа ҫине куҫарсан кубла метр – 3500 тенке яхăн, эппин, пĕр тăваткал метр 1400 тенкĕ пулать. Ҫакă – пĕтĕмĕшле ĕҫ, хатĕр стена хакĕ. Ҫурт-хуралтă тума шухăшласан чи малтан ăна мĕнрен тăвассине палăртатпăр. Ҫĕнĕ технологипе усă курса хăпартакан ҫурт-йĕр пахалăхĕпе, ĕҫ калăпăшĕпе, хакĕпе кăсăкланăр, тĕпчĕр.

Ҫĕнĕ меслетсемпе ҫурт, витехуралтă хăпартса пама пулăшакан ушкăнсем республикăра суйламалăх пур. Ҫырса кăтартнă меслетпе ҫурт стенисене мĕнле тунине хăвăр куҫпа хаклама, тĕрĕслеме пулать. Тен, хальхи самана сĕнекен ҫĕнĕ технологи продукцийĕ шăпах сире юрăхлă, меллĕ килсе тухĕ.

**Эльвира ИВАНОВА.**

Реклама

С У Т А Т Ă П / П Р О Д А Ю

**225.ПолистиролБЕТОН** для самостоятельной заливки стен и перекрытий. **Тел. 89276680373.**

компания
**немецкие**
**ОКНА И ДВЕРИ**
• рольставни • ворота • жалюзи
• **замер** • **доставка** (бесплатно)
• **установка** под ключ
скидка до 45%
**8(927)844-78-11 • 68-78-01**

**Мини-тракторы, мотобуксировщики, МОТОБЛОКИ, косилки роторные, двигатель дизельный 18 л. с., доильные аппараты.**
**Ремонт. Гарантия.**
Маг. «Каскад» , г. Чебоксары, ул. Университетская, 10, ост. «ул. Ахазова». **Тел. 41-59-83.**

**МОТОБЛОКИ.**
**Ставлю двигатели "Subaru" /пр-во Япония/ на отечественные мотоблоки.**
Маг. "Каскад", г. Чебоксары, ул. Университетская, 10, ост. "ул. Ахазова". **Тел. 41-59-83.**

**Реклама пĕлтерӳ**
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**Изготовление в короткие сроки.**
**Гарантия качества**
**Скидки до 30 %**
**Тел. 89176594701.**

**КИРПИЧ**
**более 500 видов и цветов.**
**Газосиликатные блоки**
**ТК «ТЕРМИНАЛ».**
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1,
**тел. 30-55-15,**
г. Новочебоксарск, ул Промышленная, 41,
**тел. 73-84-12.**

## ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**28.Вăкăр, ĕне, тына,** сысна амисем. Т. 8-927-999-37-37.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**50.Коров, тёлок.** Т. 8-927-850-85-64.

**96.КРС** – коров, бычков; свиноматок. **Дорого.** Т. 89061327604.

**108.Коров, тёлок.** Т. 8-937-014-49-97.

**147.Тёлок, коров, бычков, лошадей.** Т. 8-903-389-85-72.

**148.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-905-197-50-04.

**149.Коров, лошадей, бычков, тёлок.** Т. 8-903-066-46-41.

**249.Шерсть осеннюю,** не битую, очищенную – 50 р. Т. 89373744701.

**253.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89613429059.

## ĔÇ/РАБОТА

**250.Требуются водители категории "Е".** База находится в г. Казань. З/п от 50000 до 90000 руб. Т. 8-917-233-43-16.

**255.МОНОЛИТЧИКИ в Подмосковье.** Жилье, питание, з/п 2 раза в месяц. Т. 8-917-673-77-73.

## ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**36.Олег Боголюбов – маг,** экстрасенс, хиромант. Поможет в решении семейных и финансовых проблем. Исправление судьбы. Снятие любых порч и проклятий. **Т. 8-906-380-86-28.**

**38.ЧИСТКА колодцев, скважин. Навесы.** Т. 8-967-471-50-70.

**43.Бурение скважин** "под ключ". Гарантия. Т. 89276684382.

**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur21.ru. Т. 89053434207.

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 89373756378, Мила.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** – за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**87.ТАМАДА.** Т. 8-937-393-57-79.

**125.Бурение скважин на воду.** Т. 8-906-381-60-37.

**141.Обшивка** сайдингом. **Утепление. Кровля.** Т. 89176500640.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**159.Утепление домов пеноизолом.** Гарантия. Скидки. Т. 38-03-73.

**161.Создаем интернет сайты** – от 25000 руб. Т. 89677918905.

**163.**Профессиональная **замена старой электропроводки** в частных домах. Т. 89370153540.

**187.Бурение скважин.** Опыт. Гарантия. Паспорт. Т. 8-906-131-21-24.

**201.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ,** натяжные **потолки.** Т. 8-927-667-20-88.

**206.Кухни** с изюминкой, **спальни** с перчиком. Цвета в ассортименте. Внимание! Старую мебель примем в счет предоплаты. **Выезд в районы.** Т. 8-903-345-68-65.

**213.Бурение скважин на воду.** Т.: 8-962-321-17-80, 21-17-80.

**215.Строим, ремонтируем** дома, дачи, бани, хозпостройки. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-987-578-36-96, 8-927-857-99-16.

**226.Строим** пристрои, сараи, дома, заборы. Кровля. Т. 89373744701.

**228.Строительные работы** от фундамента до кровли, бани, фасады, заборы. Т. 89373762324.

**230.Услуги мини-экскаватора. Бурение** скважин на воду "под ключ". Т. 8-927-862-55-31.

**236.Кровельные, фасадные работы. Установка** забора. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**238.Бурение скважин на воду.** Быстро. Качественно. Гарантия. Т.:89603012513, 89279916699.

**270.**Профессиональное **утепление домов ЭКОВАТОЙ и ПЕНОИЗОЛОМ.** Гарантия на монтаж. Весной дешевле! Т. 8-919-669-1666.

## СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки, прихожие, шкафы, комоды, столы, кровати. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.
**Сайт:** www.ex-comfort.ru.

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. **Песок,** ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. Работаем без выходных. **Т. 8-960-307-31-51.**

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** пустотелые 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40; полнотелые 20х20х40 – заводские; **ЦЕМЕНТ** – недорого. Кассовый чек. Доставка. Разгрузка. **Т. 8-960-301-63-74.**

**7.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-927-668-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Т. 89033583021.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг. Согнём** любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**15.Кирпич любой,** керамблоки, кольца. **Бурение.** Т. 89613393363.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – около 100 видов, **СЕТКУ СВАРНУЮ,** кладочную, штукатурную; проволоку, столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 89379522211.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **копалки,** окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные КОЛЬЦА.** Т. 89033468556.

**27.КИРПИЧ** рядовой, облицовочный, **блоки керамзитобетонные.** Доставка. Т. 8-903-322-02-08.

**31.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**40.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 8-903-389-14-00.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**47.ОКНА** Чувашии, **ДВЕРИ** железные, межкомнатные. **Т. 89050281182.**

**54.ПРОФНАСТИЛ** оцинкованный **заборный** 2 м/п. Цена за лист **360** рублей. Т. 8-965-681-27-73.

**58.**Сетку-рабицу, заборы, **ворота** /кованые, распашные, гаражные/, ДВЕРИ железные, ОКНА пластиковые. Кровля и обшивка домов. **ТЕПЛИЦЫ,** навесы. Строительные работы. Д-ка. Установка. Гарантия. **Льготникам скидки.** Т.: 89022881447, 387574. Сайт: metalservis21.ru.

**61.ЗАБОРЫ и т.д.** Т. 89877372939.

**76.Срубы** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

**93.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



**95.ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 8-927-844-15-01.

**98.Бетон,** раствор с зимней добавкой, фунд. **блоки, плиты** перекрытия, перемычки, доски. Д-ка. Дёшево. Т. 89278535732.

**104.Теплицы по низким ценам.** Доставка. Сборка. Т. 48-16-54.



**120.Теплицы из поликарбоната** 3х4, 3х6, 3х8, 3х10. В наличии. Доставка по ЧР. Пенсионерам скидки. Т. 36-06-16,48-08-23.

**129.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната.** Доставка. Скидки. Т. 89276676202.

**142.ОКНА. Дёшево.** Т. 89276684382.

**154.Металлочерепицу,** профнастил, металлосайдинг, водостоки. Доставка. Замер. **Строительство.** Т. 8-919-653-43-68.

**158.ПРИЦЕП трактора, мотоблока.** Т. 8-905-344-47-35.

**165.Бетон, ОПГС, песок.** Доставка. Скидки. Т. 89677906116.

**172.Теплицы оцинкованные** от производителя: 3х4, 3х6, 3х8 в наличии. **Доставка.** Сборка. Т. 8-987-669-34-19.

**173.ДОИЛЬНЫЕ АППАРАТЫ.** Т. 8-905-341-96-00.

**176.Гравмассу, песок** речной и карьерный, **КЕРАМБЛОКИ, навоз.** Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

**185.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Скидки. Т. 8-927-846-24-10.

**186.Теплицы, ворота, заборы,** банные **печи.** Т. 8-906-134-04-04.

**193.Однокомн. квартиру** /после ремонта/ в г. Канаш, по ул. Свобода, д. 30. Т. 8-906-388-29-78.

**200.Навоз, торф, песок, гравмассу.** Возможно в мешках – навоз, торф. Т. 8-927-862-64-12, Руслан.

**203.Песок, щебень, гравмассу.** Доставка. Скидки. Т. 8-987-667-97-56.

**208.Пасеку и пчелосемьи.** Т. 8-919-653-50-92.

**212.Бетон,** песок, **гравмассу,** кирпич, **доски.** Т. 89603063254.

**214.Керамблоки** /40х20х20, 40х12х20, 40х9х20/ пропаренные, вибропрессованные – **недорого. Доставка.** Т. 8-917-677-68-46.

**219.Гравмассу, песок, щебень** – 20 тн. Доставка. Т. 8-917-650-03-85.

**223.ОКНА, теплицы,** обшивка домов. **Двери** стальные. Гарантия 15 л. Скидки 40%. Т. 89196624097.

**231.ЯЙЦА и ЦЫПЛЯТ фазанов.** Т. 8-937-396-74-72, Евгений.

**233.Оборудование и запчасти:** <u>для птицеводства</u> – инкубаторы, кормушки, поилки и т.д.; <u>для животноводства</u> – бытовые агрегаты индивидуального доения, доильные аппараты, молочные фляги, молокомеры, маслобойки, транспортеры ТСН, автопоилки, комплектующие узлы к ним и др.; насосы погружные скважинные ЭЦВ, вакуумные масляные УВД и бытовые НВ-12, водокольцевые НВМ, молочные и другое оборудование для села. Для вязания сена шпагат полипропиленовый ТЕКС – 2200. Адрес: г. Чебоксары, Школьный проезд, д. 1, офис 216. Тел.: 56-40-73, 56-48-05, моб. 89176724124, 89278426769.

**234.Пластиковые ОКНА** – низкие цены. Т. 8-962-321-55-82.

**235.**Тротуарные **ПЛИТЫ, брусчатку,** экопарковку, песок, щебень, **гравмассу,** цемент. Доставка. Укладка. Скидки. Т. 89033220479.

**237.Профнастил,** металлочерепицу, **сайдинг,** водостоки, утеплители. Скидки. **Доставка.** Монтаж. Замер. Т. 8-903-322-04-79.

**239.Нетелей и телят** /до года/. Т. 8-960-301-05-52.

**240.Заборы** /профнастил, рабица, кованые/, ворота, калитки, навесы. Кровля. Т. 89033582042.

**241.Тротуарные плиты,** брусчатку, бордюры, **водостоки.** Доставка. **Укладка.** Т. 89033582042.

**242.Усадьба с хозяйственными постройками** и землей 0,17 га в д. Чубаево Урмарского р-на. Т. 8-906-386-39-85.

**251. Пчелосемьи.** Т. 8-967-470-62-49.

**276.ПЧЕЛОСЕМЬИ, УЛЬЯ.** Т.: 8-927-868-73-02, 8-927-857-33-85.

**828.Блоки КБ** от 30 руб., **доски** обрезные от 5500 руб., **песок,** ОПГС, **щебень.** Доставка. Услуги манипулятора. Т.: 8-903-345-53-24, 8-903-322-25-32.

ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ
ХЫПАР
ИЗДАТЕЛЬСКИЙ ДОМ

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

**Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ**
**Редактор Э.Н.ИВАНОВА**

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:**
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Кил-çурт, хушма хуçалăх".
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:**
56-15-30, 56-00-67.
**коммерци дирекцийĕ:**
28-83-70, 62-50-08
56-20-07 – инспекторсем.

**Факс:** /8352/ 28-83-70.
**Электронлă почта:**
hypar@mail.ru

hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

**Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.**

20.04.2016. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.

**Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 64-24-01 – издательство директорĕ.**

Тираж 15038. Заказ 1330.